Спорт тата сывлăх

# Спортзалсене çӳреме те пуçарулăх кирлĕ

***Юлашки çулсенче сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси пирки çĕршыв шайĕнче те нумай калаçаççĕ. Пирĕн республикăра та физкультурăпа спорт комплексĕсен шучĕ ӳссе пырать. Паллах, вĕсем хуласемпе райцентрсенче пурăнакансене ытларах тивĕçтереççĕ. Ялта пурăнакансен вара спортзалсемпе спорт площадкисем çине шанчăк ытларах хумалла. Вĕсемпе мĕнле усă кураççĕ-ха районта? Çак ыйту çине район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçине Зоя Юрьевна ДИПЛОМАТОВАНА хурав пама ыйтрăмăр:***

– Хальхи вăхăтра физкультурăпа тата спортпа интересленекенсене тивĕçтерме районта пирĕн пурĕ 26 спортзал, тĕрлĕ площадкăсемпе тӳрем спорт сооруженийĕсем 95. Пĕлтĕр «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайрĕ. Кунсăр пуçне 7 тир тата вĕрентӳ пайĕ çумĕнчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ ĕçлет. Вĕсем пулнипе ĕнтĕ кăçалхи 9 уйăхра район шайĕнче 16 тĕрлĕ спорт енĕпе пурĕ 47 ăмăрту ирттернĕ. Вĕсене хутшăнакансем тĕрлĕ ӳсĕмри 6 пин çын ытла. Каламалла, паянхи куна физкультурăпа спорта, сывă пурнăç йĕркине тытса пырассипе спортзалсем ĕçлени пĕтĕмĕшле 40 процентпа, площадкăсем 60 процентпа çеç танлашаççĕ.

**– Каçхи вăхăтра спортзалсене çӳрекенсем пур-и?**

– Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче 19 спортзал. Вĕсенче кăнтăрлахи вăхăтра физкультура урокĕсем иртеççĕ пулсан, каçхи вăхăтра вара çирĕплетнĕ графикпа тренировкăсем, вăйăсем йĕркелеççĕ. Ытларах чухне ял çыннисем волейбол, баскетбол тата мини-футбол вăййисене килĕштерни сисĕнет. Анчах та çамрăксем хушшинче тăтăш физкультура занятийĕсене çӳрекенсем сахал пулни пăшăрхантарать. Кашни çыншăнах сывлăх малти вырăнта пултăрччĕ. Çакна вара çамрăксем ăнланса илсен аван. Кашни ялтах социаллă активлă çынсем пуçарулăх кăтартсанччĕ.

**– Юлашки вăхăтра спорт сооруженийĕсемпе эффективлă усă курасси пирки патшалăх шайĕнче те сахал мар калаçаççĕ. Пирĕн районта вĕсемпе çапла усă курма майсем мĕнлерех-ха?**

– Çапла, ку ыйту паянхи кун питĕ актуаллă ыйтусен шутĕнче. Акă иртнĕ эрнере Канаш районĕнчи Шăхасанта иртнĕ республика канашлăвĕнче те çак темăпа, уйрăмах ФСК-сене эффективлă ĕçлеттерессипе, тĕрлĕ сĕнӳсем пулчĕç.

Пирĕн районти «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне туллин ĕçлеттерес тесе çамрăксене, ĕçлекен çынсене унти занятисене явăçтарас тĕллевпе тĕрлĕ акцисем ирттертĕмĕр. Анчах та усси сахалрах пулни курăнчĕ. Активлă кану, сывлăх пирки сахалрах шутлатпăр пулас. Ачасене вара паянхи куна бассейнра шыва кĕртессине йĕркеленĕ. Ку тӳлевсĕр пулса пырать. Мĕншĕн тесен пирĕн вĕренӳ саккун тăрăх тӳлевсĕр. Çапла майпа физкультура урокĕсен 20 процентĕ çакăнта иртет. Анчах та районти 29 шкул хушшинче 17-шĕн çеç автобуссем пур. Апла пулсан хăш-пĕр шкулсемшĕн те ку ыйту пăтăрмахлă. Çуллахи вăхăтра та май пур таран шкулсем çумĕнче йĕркеленнĕ тĕрлĕ енпе ĕçлекен лагерьсене çӳрекенсене те çак занятисене явăçтарнăччĕ.

Çамрăксем пирки калас пулсан, вĕсене эпир, паллах, çапла майпа ФСК-на çӳретterейместпĕр. Вĕсен хăйсен пурнăçĕ тата кун йĕрки. Малашлăх пирки те кашни тĕрлĕрен шутлать. Паянхи кун пирки те. Каçсерен спортзалсене тухса тĕрлĕ спорт вăййисене вылякан çамрăксем пурришĕн те савăнмалла.

**– Раççей Федерацийĕн Правительстви çĕршывăн 2012 çулчченхи социаллă тата экономика аталанăвĕн Концепцинче çамрăксем хушшинче волонтерсен юхăмне йĕркелесе ярас пирки те сăмах пур. Спорт енне илсен те тен çак юхăма хутшăнас текенсем пулĕç.**

– Çамрăксем хушшинче волонтерсем пулсан питĕ аван. Кам-ха вăл волонтер? Çак çын хăйĕн ирĕкĕпе пĕр-пĕр ĕçе йĕркелесе пурнăçăн мĕнле те пулин сферинче усă пама пултарать. Калăпăр, тирпей-илем кĕртессипе, сывă пурнăç йĕркине тытса пыма хистессипе тата физкультура занятийĕсене йĕркелесе ярассипе те. Унăн ĕçĕ вара çынсемшĕн усăллă пулмалла. Пуçарулăх кирлĕ çамрăксен, вара пĕтĕмпех пулать. Ял тăрăхĕсем хастар çамрăксемсĕрех мар пулĕ тесе шутлатăп. Спортзалсем ĕçлеççĕ, площадкăсем пур. Апла пулсан сывлăхлă пуласси те, спортзалсемпе туллин усă курасси те кашнинченех килет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Йывăç лартмалли уйăхлăх

## «Астăвăм паркĕ» тымарланчĕ

Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче «Астăвăм паркĕ» соцпроект пĕрремĕш утăмсем турĕ. Республикăри аслă шкулсенче вĕренекенсемпе тата çамрăксен экологи дружинипе пĕрле Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекенсем те, ял çыннисем те, ял тăрăхĕн администрацийĕ те хутшăнчĕç унта.

Чăрăш хунавĕсене студентсем илсе килнĕ, хурăнсене вара ял çыннисем тупма пулăшнă. Ял варринчи парка Аслă Отечественнăй вăрçăра пуç хунисене асăнса тума йышăннă. Çитес Çĕнтерӳ кунĕ валли кунти хунавсем ешерме тытăнĕç.

## Тата 200 хунав хушăнчĕ

Кунсерен çын пин-пин йывăçа пĕтерет. Йывăç вара – çут çанталăк панă илемсенчен пĕри, пире пурăнма пулăшакан та.

Юнкăри вăтам шкулта вĕренекенсем çакна аван пĕлеççĕ. Çавăнпах иртнĕ кунсенче 6 тата 8 класс ачисем хăйсен класс ертӳçисемпе Т.В. Ермаковапа тата Л.Г. Столяровапа Састай вăрманĕ патĕнче йывăçсем лартрĕç. Хурăнсем, çăкасем тата чăрăшсем – пурĕ 200 хунав – хăйсен вырăнне тупрĕç.

Истори страницисем

# Юратнă шкул: ĕнер, паян, ыран

**3. Революци тата граждан вăрçи çулĕсенче (1917-1922)**

1914 çулта шкула Андрей Ермолаевич Ермолаев ертсе пыма пуçлать. Çак ĕçе вăл 1919 çулта пăрахнă.

1917 çулта Муркашри шкулта пурĕ те икĕ класс çеç пулнă. 1918 çулхи январĕн 20-мĕшĕнчи РСФСР Совнаркомĕн декречĕпе çирĕплетнĕ тăрăх, чиркӳ патшалăхран уйрăлнă, шкул – чиркӳрен. Тĕн ыйтăвĕпе çыхăннă уроксене пур патшалăх тата уйрăм çынсен вĕрентӳ заведенийĕсенче вĕрентме чарнă.

Совет влаçĕн пĕрремĕш çулĕсенче училищĕре вĕренекенсем тăван ене аталантарассишĕн тăрăшнă. Çав çулсенчи выпускниксем хушшинче Алексей Авдеев – Мăн Шаптакри комсомол ячейкине йĕркелесе яраканĕ, Петр Неволин – Муркаш ял Совечĕн ĕçтăвком председателĕ, Лукоян Тимофеев – халăх сучĕн заседателĕ, Андрей Ермолаев – учитель, Ефим Киселев – агроном, Спиридон Яковлев – революциччен священник, хыççăн – учитель тата ыттисем те пулнă.



Земство училищин 1917 çулти выпускникĕ Магаев Захар Макарович.

З.М. Магаев выпускник аса илнинчен: «Эпĕ 1904 çулта Шаптак ялĕнчи чухăнсен çемйинче çуралнă. 1921 çулта Иваново облаçĕнче батракра пурăннă. 1924 çулта мана комсомола илнĕ. РККА-ра хĕсметре пулнă, кайран бухгалтер профессине алла илнĕ. 1942 çулта вăрçа тухса кайрăм. Унта Германи таранах çитрĕм. Вăрçă хыççăн гособеспечени пайĕн ертӳçи, колхозра тата больницăра бухгалтер пулса ĕçленĕ. Нумай вăхăт хушши «Сталин» колхозри парторганизаци секретарĕ пулса тăрăшрăм».

1917-18 çулсенче Муркашра пĕр ступеньлĕ пĕрлĕхлĕ ĕç шкулĕ туса хураççĕ. Унта 4 ушкăнран тăракан икĕ класс йĕркеленĕ.

Учительсем пулса Анастасия Федоровна Федорова тата Мария Антоновна Антонова ĕçленĕ. Шкулта 50 ача вĕреннĕ. Ятарлă хăмасем çинче грифельпе çырнă. Хăма çуккисем парта çинчех çырни те пулкаланă. Экзаменсем пулман. Шкулăн çĕр лаптăкĕ те пулнă. Ĕç урокĕсенче ал ĕçне тума хăнăхтарнă. Шкулта тӳлевсĕр вĕрентнĕ. Шкулта, республикăн ытти вырăнĕсенчи пекех, чăвашла вĕрентнĕ.

**4. 20-мĕш çулсенчи шкул**

1925 çулхи августăн 31-мĕшĕнче пирĕн çĕршывра шкул сетьне улăштарасси çинчен декрет тухать. Çав декретпах пурин те пуçламăш пĕлӳ илмеллине те çирĕплетнĕ пулнă.

Çав вăхăтра шкулта А.Е. Ермолаев, Н.Н. Ермолаева, К.К. Константинов, А.А. Сютрукова тата П.А. Кузнецова учительсем ĕçленĕ.

Тепĕр çулхине, 5-мĕш сентябрьтенпе Муркаш шкулĕ ултă çул вĕренмелли шкул пулса тăрать. Унăн заведующийĕ пулма Герасим Федорович Федорова çирĕплетеççĕ.

1927 çулта унăн вырăнне Вăрмар районĕнче çуралса ӳснĕ Иван Яковлевич Ермолаева лартаççĕ. Шкулта «Шкул пурнăçĕ» ятпа хаçат тухса тăнă. Драма кружокĕ те ĕçленĕ.

1926-27 вĕренӳ çулĕнче 178 ача вĕреннĕ: пĕрремĕш ушкăнра 45 ача пулнă, иккĕмĕшĕнче – 34, виççĕмĕшĕнче – 27, тăваттăмĕшĕнче – 42, пиллĕкмĕшĕнче – 30. Хыççăнхи вĕренӳ çулĕнче шкулта 210 вĕренекен таран пулнă.

Шкул ачисене кĕнекесемпе тӳлевсĕрех тивĕçтернĕ. Библиотекăра вара 634 кĕнекесĕр пуçне «Çамрăк хресчен», «Капкăн», «Канаш» та çырăнса илнĕ.



Петр Павлович Павлов.

Çак вăхăтсенче кунта вĕреннĕ Петр Павлович Павлов аса илĕвĕнчен: «1928 çулхи июньте эпир ултă çул вĕренмелли шкула пĕтертĕмĕр. Шкул заведующийĕ пире Шупашкара экскурсие илсе кайнăччĕ. Çуран Шурча урлă Ишлейне çитрĕмĕр эпир. Шупашкарта вара краеведени музейĕнче, Совнаркомра тата эрех туса кăларакан заводра пулнăччĕ». Петр Павлович Мăн Сĕнтĕрти тата Ильинкăри шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. 1959 çултанпа СССР журналистсен союзĕн членĕ пулнă.

**Олимпиада ФЕДОРОВА,**
**Александра ЕГОРОВА.**
**Муркаш шкулĕ.**

Кĕскен

## Паян курав уçăлать

Районти историпе краеведени музейĕнче паян «Çĕр çыннисем» ятпа сăн ӳкерчĕксен выставки ĕçлеме пуçлать. Куракансем Мускаври Сергей Воронин фотожурналист ĕçĕсемпе паллашма пултараççĕ. Кулленхи пурнăçа ăста фотограф хăйне евĕр сăнлать.

## Волонтер пулас килет-и?

Волонтер тесе паян хăй ирĕкĕпе ку е вăл ĕçе хутшăнакан çамрăк çынсене калаççĕ. Çак юхăм пĕтĕм тĕнчипех вăй илет. Ăра, пуçарăллă яш-кĕрĕмĕн хăйсене кăтартас та, тĕрĕслесе пăхас та килет.

Паян районта 9500 çамрăк пурăнать. 1400-шĕ çак юхăма хутшăнать.

Вĕсенчен ытларахăшĕ аслă классенче вĕренекенсем. Вĕсем аслисене пулăшас, çутçанталăка упрас, канăва йĕркелес тата ытти ĕçсене хутшăнаççĕ.


Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем туянатăп.**
**Тел.: 8-903-063-07-57.**

**Продаю коз дойных, козла породистого, цвет белый «Горноальпийский». Тел.: 8-927-85-18-000.**

**Продается земельный участок площадью 0,40 га с надворными постройками под строительство.**
**Адрес: д. Сюлово Тораевского с/п, тел.: 8-909-300-67-31.**


Решение публичных слушаний от 14 октября 2009 года:

1. Проект муниципального правого акта по изменению назначения разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:070505:149, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Шомиково, площадью 40 кв. м. «для содержания зданий и сооружений Шомиковской СДК» на установку базовой станции сотовой связи ЗАО «НСС» в одобрении отказать.

2. Рекомендовать администрацию Моргаушского района не принимать решение по изменению назначения разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:070505:149, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, площадью 40 кв. м. «для содержания зданий и сооружений Шомиковской СДК» на установку базовой станции сотовой связи ЗАО «НСС».

**Глава администрации Кадикасинского сельского поселения**
**Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**


**Керамзитобетонные блоки, ОПГС, щебень, керамзит, кирпичи всех видов, песок речной, карьерный, торф.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:305, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:031001, для организации водно-спортивного причала, площадью 810 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:260103:17, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. Братьев Алексеевых, д. 15, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4203 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли особо охраняемых территорий и объектов» с кадастровым номером 21:17:049999:170, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:049999, для рекреационных целей, площадью 18549 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:091002:121, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Сидуккасы, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:091002, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2523 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Участник долевой собственности Яшков Михаил Митрофанович, 09.09.1922 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Верхний Томлай, ул. Зеленая, д. 3,** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**
**2. Яшкову Михаилу Митрофановичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Верхний Томлай, ул. Зеленая, д. 3.**

**Участник долевой собственности Яшков Олег Михайлович, 26.09.1963 года рождения, проживающий по адресу: г. Москва, Дмитровское шоссе, д. 74, корпус 1, кв. 18,** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**
**2. Яшкову Олегу Михайлолвичу, проживающему по адресу: г. Москва, Дмитровское шоссе, д. 74, корпус 1, кв. 18.**

**Участница долевой собственности Иванова Виктория Александровна, 12.03.1940 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Центральная, д. 2,** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Кадикасинское, на территории землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501 площадью 1,42 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.**
**2. Ивановой Виктории Александровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, ул. Центральная, д. 2.**

Турайри вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул хушши повар пулса ĕçленĕ

**Таисия Ивановна**
**ДМИТРИЕВА**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 27.10.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3800.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.